Материал представлен из коллекции электронной библиотеки «Писатели Чувашии – детям» – **pchd21.ru**
Электронная библиотека создана Чувашской республиканской детско-юношеской библиотекой **– www.rdub21.ru** – на средства гранта Президента Российской Федерации для поддержки творческих проектов общенационального значения в области культуры и искусства

**Автор:** **Алга Александр Егорович**

**Книга:** **Атӑлпа Сӗве хушшинче**

## Стихотворение: Ҫӗнӗ Атӑл тӑрӑх

Иш, акӑш евӗр шурӑ пӑрахут,
Хӗм ҫапнӑ кӗленче шыва кастар!
Пире ӳркев пусман, пире вӑл ют,
Эпир ҫула тухсан ялан хастар.

Миҫе хутларӑм-ши эп ачаран
Хусанпала Ульяновск хушшине?
Ҫӳл ту ҫыран, кашни вӑрман, ҫаран
Калатчӗ хӑш тӗле эп ҫитнине.

Саваттӑм сулхӑн ҫырана чунтан.
Тӑранайми пӑхаттӑм таврана.
Халь куҫнӑ-шим ҫав вӑрмансем кунтан?
Эп паллаймарӑм пӗлнӗ вырӑна.

Эй, Атӑлӑм! Парсамччӗ каласа:
Кам урӑхлатнӑ кӑҫалтан сана?
Шыв сарлака, хум кайрӗ шарласа,
Ҫук, пурпӗр ҫитес ҫук вӑл ҫырана.

Каларӗ Атӑлӑм: Эс пӳлтӗн ху
Ман ҫулӑма; эп уртӑм шутсӑр шух
Анчах ҫӗнтерчӗ паттӑр халӑху,
Ак халӗ сарӑл та йӑвашшӑн юх.

Ӑнланччӗ Атӑлӑм: эс сӑнпала
Ӗлӗкхинчен ҫӗр хут хитре паян.
Хӗвел кулса вылять ав санпала,
Эс ху та каҫсерен хӗвел ҫутан.

Ӗлӗкхинчен ҫӗр хут эс вӑйлӑрах,
Вӑл хӑватпа халь хурҫӑ шӑранать,
Хирте тырпул кашлать хаваслӑрах,
Этемӗн шухӑшӗ ҫунатланать.

Хумхан, ҫут Атӑлӑм! Иш, пӑрахут,
Хӗм ҫапнӑ кӗленче, шыва кастар!..
Умри кун-ҫул курнать пире ҫап-ҫут.
Эпир, ҫула тухсан, ялан хастар.

Все тексты взяты из открытых источников и выложены на сайте для не коммерческого использования.
Все права на тексты принадлежат только их правообладателям.